# СĂМАХСĂРАХ...










Хакĕ ирĕклĕ





Ӳкерчĕксене www.cartoobank.ru сайтран илнĕ

# БЕЗ СЛОВ...

В. ДРУЖИНИН ӳкерчĕкĕсем

ХЫПАР

2014 • 12 №

ÇĔРТМЕ – ИЮНЬ

# КАПКÀН

16+




1. ТОЛЬКО ПРИШЕЛ
2. НЕ КЛЮЕТ
3. НА ЧЕРВЯ
4. ВОДКУ БУДУ

С.Мяков ӳкерчĕкĕ

**КАПКĂН**

**Сатирăпа кулăш журналĕ**
**1925 çулхи пуш уйăхĕн**
**16-мĕшĕнче тухма пуçланă**
**12 (1606)№**
**çĕртме (июнь)**

**Учредительсем – Чăваш Республикин информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ**

**Директор-тĕп редактор**
**А.П. Леонтьев**
**Редактор –**
**Н.П. Петров**
**Художник –**
**С.Б.Мягков**
**Калăплавçă –**
**Е.А.Трофимова**

**Журнала почта уйрăмĕсенче, «Чăваш пичет» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче, редакцире çулталăкĕпех çырăнтараççĕ**

**Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00308 номерпе регистрациленĕ.**

**Индекс – 24608**

**Пичете алă пуснă: 25.06.2014**
**Пичетленĕ: 4.07.2014**
**Хут формачĕ 60х84/8**
**Усл.п.л. 1,5**
**Тираж 2330 экз.**
**Заказ К-1186**

**Ыйтмалли телефонсем:**
**56-09-31, 56-00-67, 62-50-06.**
**Редакци адресĕ:**
**428019, Шупашкар хули,**
**Иван Яковлев пр., 13.**
**факс: (8352) 62-50-06, 28-83-70**

**www.hypar.ru**
**e-mail: atal-volga@mail.ru**

**Журнала «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.**

**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, тавăрса памаççĕ. Журналăн юрăхсăр экземплярĕсем тĕл пулсан издательство типографине пĕлтермелле.**
**Кунти материалсене «Капкăнран» илнине асăнмасăр тепĕр хут усă курма юрамасть.**




– Поразительно, как народ реагирует на принятие нами новых законопроектов...




**– Пенси ÿсет вăштик, анчах кĕсьере пшик!**

– Пенсия растет, но в карманах пусто!

**С. Мягков ÿкерчĕкĕсем**

## Култармăш Тултармăш









– Доктор, я жить буду?
– А ты по моей ладони погадай!




## Балаганчик Барабанчик






– Хуже нет оперировать фокусника.

Д. Бандура, В. Анчуков, С. Нагорский ÿкерчĕкĕсем

# Амасем каллех тапăнаççĕ

**Памфлет**

Историксем амазонкăсем пирки тĕрлĕрен калаçаççĕ. Пĕрисем кунашкал тапхăр этемлĕх аталанăвĕнче пачах пулман тесе ĕнентереççĕ, теприсем хĕр салтаксен вăрçи нумай ĕмĕр каяллах пулнă та ун çинчен халĕ тин ăслăлăх ыйтнă пек ăнлантарса пама май çук тесе алă сулаççĕ. Амазонкăсене сума сăвакансен çакăншăн пуç усма кирлех-ши? Тĕнчен тĕлĕнтермĕшĕсем пайтах. Хăш чухне шырамасăр-мĕнсĕрех ăслăлăх алăкĕ яри уçăлать те – эврика! Никам курман çĕнĕлĕх куç умне тухать. Çавнашкал пĕр тĕслĕхе хам та курсаилтсе пĕлтĕм.

Пĕррехинче инçе çула тухсан çакăн пирки пĕлекенсем каласа пачĕç. Çук, ман пирки усал ан шутлăрах – вăрттăн-кĕрттĕн итлемен. Автобуспа пынă чухне хăлхана кĕчĕ çак ăслă хыпар. Салонта пассажирсем лăк тулличчĕ, пурте пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, тĕрлĕ хыпар-хăнара сӳтсе яваççĕ. Илтмĕше персен те пăкăламан хăлха илтетех ĕнтĕ.

Ман çумрах иккĕн тăраççĕ. Те арçынсем, те хĕрарăмсем – пĕлме çук. Иккĕшĕ те шăлаварпа, иккĕшĕ те çӳçне кăтралатнă. Сăмса çинче – сăмса çакки, хăлха çинче – хăлха çакки...

– Ку чухнехи çамрăксене ăнланмастăп, – тет пĕри.– Ытла та кулăшла тăхăнса çӳреççĕ-çке. Вăн çавна, чӳрече çумĕнче тăракан пуса каччинех, илерха. Сăмси çине мĕн тума шăрça тирĕнтернĕ-ши?




– Пуса каччи мар вăл – манăн хĕр! – касса татрĕ тепри.

– Ай эсĕ унăн ашшĕ-им? Кам шутланă?

– Ашшĕ мар, амăшĕ эпĕ...

Ак япала! Эпĕ çĕнĕ ăслай уçрăм-иç. Этемлĕхĕн черченкĕ çурин чеелĕх тактикине шĕкĕлчеме пултартăм. Хĕрсемпе хĕрарăмсем арçынсене парăнтарас тĕллевпе тем те пĕр шутласа тупаççĕ. Тумланса та, капăрланса та, курнăçланса та... Унсăр пуçне пирус мăкăрлантарса та, эрех черккине шалттин йăвантарса та... Пĕр сăмахпа каласан, амазонка вăрçи паян кунччен вĕресе тăрать, халĕ те таммалман. Паян кун та хĕрарăмсем айван арçынсене тапăнаççĕ. Пуç çĕклеме те памаççĕ. Истори авăкне путма шутламаççĕ те.

**Николай ИШЕНТЕЙ**

# Сĕннине пурнăçламасан

Хула хыçне пан улми татма пынă дача хуçи хăйĕн пахчинчи капмар пӳрчĕ «çĕлĕксĕр» ларнине асăрхать те Шупашкар еннелле вашкăртать, полици пайне çитсе пăлханулллăн евитлет:

– Çаратрĕç. Пуççăр, тăрăсăр тăратса хăварчĕç. Пулăшăр, тархасшăн?

– Пуçу вырăнтах-çке, мăшкăллаттаратăп ак, – тесе йĕркелĕх хуралçи ăна ăрсурниксене хупмалли читлĕх еннелле патаккипе тĕллесе кăтартать.

– Хамăн пуç пирки мар эп, вăл вырăнтах-ха, дача тăрри пирки. Пĕлтĕр кăна витрĕм хумлă-хумлă алюмини шăвăçпа. Çур миллиона ларчĕ.

– Шăпланăр, гражданин. Ыйтасшăн, эсир пурнăçланă-и-ха пирĕн сĕнĕве? Хăвăрăн хуçалăха сыхлассишĕн хăвăрăнах тимлĕ пулмалли пирки каласа та ывăннă ĕнтĕ эпир. Сыхланмалли хатĕрпе усă куратăр-и?

– Паллах. Алăка та, чӳречесене те броня йышши тимĕр листипе хупланă. Тăрă вĕт ку?

– Паллă, тăрă. Тăрри шăтăк пулнă çав хăвăрăн.

– А ман мĕнле сыхласа хăвармаллаччĕ-ха ăна?

– Тимĕр сетка кармалла пулнă пӳрт тăррине. Шел те, пулăшма шантараймастпăр. Машина та, çын та çитмест. Каккуй унашкал вак-тĕвекпе аппаланма пирĕн вăхăт. Полковникăн юратнă йыттине хваттерĕнчен такам çаклатса тухса кайнă. Иртенпех тревога! Пĕтĕм личнăй состав хула тăрăх йытă шырать. Туп-ха ăна, чышкă пек чихуа-чинехуана. «Гау!» тесе вĕрекен йытта асăрхасан пĕлтерме ыйтатпăр. Садри пӳрт вăл тăрăсăр та ларать...

**В. КУЗЬМИН**

# Хăшне «çумламалла», хăшне сыватмалла

«Ухмаха акмаççĕ, вăл хăех шăтать», – çапла калаççĕ халăхра. Анчах ăс-тăна минретекен, çынна ухмаха кăларакан им-çама лартса ӳстерекенсем те, пухса илекенсем те пур. Вăл шутра – пирĕн республикăра та. Çавăн пекех унашкал препаратсене сывлăха сыхлакан учрежденисенче те тупма май пур иккен, енчен те кодеин е çавăн йышши хаяр эмелсене рецептсăрах сутаççĕ, урăх тăрăхран кӳрсе килеççĕ пулсан.

Çакна шута илсе Чăваш Республикинче наркотикпа кĕрешекенсем сыхă тăраççĕ. Çул пуçламăшĕнче, малтанхи тăватă уйăхра кăна, наркополицейскисем Шупашкар тата Çĕнĕ Шупашкар хулисенче наркотикпа çыхăннă виçĕ преступление уçса панă.

Нумаях пулмасть республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынипе наркотика хирĕç кĕрешекен комисси ларăвĕ иртрĕ. Унта хутшăннисем хамăр регионта наркотикпа тата ăс-тăна минретекен хатĕрсемпе айкашакансене сыватассипе комплекслă ĕçлекен наци центрне йĕркелес ыйтăва сӳтсе явнă.

Влаç органĕсемпе йĕрке хуралçисен халăхпа тачă çыхăнса ĕçлемелле, çынна ухмаха ертекен им-çампа усă куракансене, наркопритонсене тĕпĕ-йĕрĕпех «çумламалла». Инкек тӳснисене вара вăхăтра сыватмалла.

**Н. ПЕТРОВ**

А.Быков ӳкерчĕкĕ («Капкăн» 1991 ç.)



**– Карчăк, аптрамăпăр, салтак пире пăтă пĕçерме вĕрентрĕ вĕт.**

– Не пропадем, старуха, научил нас солдат кашу варить.

# Раççей çĕрĕ питĕ пуян – хамăрăннех çиесчĕ

Çĕр кăкăрĕ çăкăр парать теççĕ, анчах эпир çиекен апат-çимĕçрен çурри ытларахăшĕ – ютран кӳрсе килни.

Хамăра хамăр тăрантарма тата тумлантарма пултаратпăр-çке эпир. Кунта ӳсмен улма-çырлана сахалтарах турттарма та пире никам чармасть. Хальхи вăхăтра ютран тĕш тырă 20 процент кӳреççĕ, сĕт – 40%, улма-çырла – 50%, аш-какай – 30%. Пулă тытассипе эпир хамăра тĕппипех тивĕçтеретпĕр, анчах ăна хамăрăн сентресем патне çитерейместпĕр, çавăнпа 25 процент таран кӳрсе килетпĕр. Çапах та лару-тăру майĕпен улшăнма пуçларĕ. Доллар хакĕ ӳссех пынипе ютсен апат-çимĕçне нумайăшĕ туянаймасть. Унсăр пуçне Хĕвел анăç Европăпа Америка çĕр-шывĕсем пире санкцисемпе хăратаççĕ. Апла ирĕксĕрех хамăра мĕнле тăрантармалли çинчен шухăшламалла. Раççей ял хуçалăх министрĕн шухăшĕпе эпир çакна тума пултаратпăр.

– Паянхи куна Раççей çыннин потребитель карçинккинче 80 процент таран хамăр çĕр-шыври аш-какайпа сĕт-çу çимĕçĕ. Ют çĕр-шывсен тӳпине тивекен пай çулсерен чакса пырать, – палăртаççĕ ял хуçалăхĕнче тăрăшакансем.

Чăх-чĕп пăхакансем çитес вăхăтра пире чăх ашĕпе туллин тивĕçтерессе шанаççĕ. Кăçалах сысна ашĕ туса илесси ӳсет. Ĕне выльăх ашĕпе вара йывăртарах. Анчах тăрăшсан йывăрлăхран тухма пулать.

– Патшалăх тĕплĕ шухăшласа укçа хывсан пилĕк çул хушшинче эпир çĕр-шыва хамăр апат-çимĕçпе тивĕçтерме пултаратпăр, – тет Хресчен хуçалăхĕсен тата ял хуçалăх кооперативĕсен пĕрлĕхĕн председателĕ Вячеслав Телегин. – Юлашки вăхăтра çемье фермисем ĕне выльăх ашĕ туса илессине ӳстерсе пыраççĕ. Апла вĕсене ытларах пулăшмалла.

– Совет влаçĕ вăхăтĕнче кашни çын пуçне 1 л таран сĕт тивнĕ. Халĕ мĕн кансĕрлет? Сĕт суса илессипе эпир тĕнчере чи малти пулмалла, – пĕлтерет сĕт туса илекенсен пĕрлĕхĕн председателĕ Андрей Даниленко. – Хальлĕхе вара эпир 7-мĕш вырăн йышăнатпăр, чи пысăк импортер шутланатпăр. Лару-тăрăва лайăхлатма патшалăх пулăшăвĕ кирлĕ.

Чăн та, хамăра хамăр тивĕçтерме, ют çĕр-шыв конкуренчĕсене тĕксе хăварма пирĕн пурте пур темелле. Ял хуçалăхĕ енне çурăмпа кăна тăмалла мар: ĕçлекене дотаци, кредит парса пулăшмалла, хресчен сумне çĕклемелле. Çĕр ĕçĕнче ăстасем пулмасан çĕр те тăлăха тухать.

**Е. НИКОЛАЕВА**

**Левтина Марье**

# Шампа хырăм

Шутламасăр качча тухрăм
Шампа хырăма.
Хам валли хĕн-терт эп тупрăм —
Йывăр чунăма.

Пĕçерсе ĕлкĕрейместĕп:
Сысна пек чапкать.
Тĕлĕнсе пĕтерейместĕп, —
Вăт этем пулать.

Эп упаленсе ĕçлетĕп,
Вăл туртса ларать.
Çĕр чаватăп, кĕреплелетĕп —
Вăл харлаттарать.

Кӳршĕ, ĕçчен Сантăр, питĕ
Хĕрхенет мана:
— Мăшкăла тӳссе, тен, çитĕ,
Тăн кĕртер ăна.

Пăшăл пăтти пĕçерер пуль
Упăшку тăрсан...
Эп сана чĕнсессĕн йăл кул —
Кĕвĕçтĕр чунтан...

Кӳршĕпе халь калаçатăп
Юри йăл кулса.
Васука пĕрмай сăнатăп:
Тăрать анраса...

Ак хайхи тем мăкăртатрĕ
Канăçсăрланса:
«Арăм, — терĕ, ыталарĕ, —
Ан кай пăрахса...

Сантăра çапса хуçатăп
Кĕвĕçнипеле!
Мĕн хушан — йăлтах тăватăп,
Ĕçлĕпĕр пĕрле.

Малашне нумай çиместĕп —
Хырăм çурăлать.
Çывăрса кӳрентерместĕп —
Пуçăм ыратать...

Касарсамччĕ, манра çылăх
Темĕн чухлĕ пек...
Вĕçсе кайрĕ ĕнтĕ ыйăх,
Илĕртмĕ текех...»

«Ах, Васук, юратнă мăшăр,
Ан кулян çаплах...
Юнашар ытла та ăшă
Пĕр санпа анчах...»

Çавăнтах ĕçле пуçларĕ
Васук тăрăшса.
Чупса пычĕ, ытамларĕ:
«Лар, — терĕ, — канса...»

«Мана пулăшнăшăн, — тетĕп,
Сантăра тавах!»
Мăшăра халь хисеплетĕп:
Улшăнчĕ йăлтах.



**Сăмахсăрах.** Без слов.

## Сăнавсем мĕне пĕлтереççĕ?

- Мăй ыратни – ун çине кам та пулин ларасса.
- Чĕлхе кĕçĕтни – политика картлашкипе çĕкленессе.
- Анчăк вĕрни – усал кӳршĕ килессе.
- Шăл катални – укçа каясса.
- Хура кушак çул урлă каçни – пуçлăх ятласса.
- Кĕсье шăтни – чухăна юлассa.
- Автомашина чăхăмлани – бензин хакланасса.

## Унти-кунти сас-хура

• Чи çӳллĕ йывăçăн та тымарĕ çĕртех пулать.
• Чухăнлăх кӳрекен кризис «амăшĕ» чаплă кермента пурăнать.
• Пулăшком йышăну тунă: чухăннисене – вăлтапа, пуяннисене пулăпа тивĕçтермелле.
• Арăмĕ ӳсĕр упăшкин кĕпине унăн кăкăрĕ çинчех вĕри утюгпа якатнă.
• Ташă кĕввине нерва çинче вылякансене политиксем теççĕ.

## Чăваш ялĕнче – десант!

Ют çĕр-шывран курма килнĕ туристсем чăваш ялне экскурсие кайнă. Çитнĕ çырмаллă пĕр яла. Хайхискерсем автобусран тухнă та темиçе утăм тунă. Кĕтмен çĕртен куç умне хăрушла ÿкерчĕк тухнă: такамсем лапамлă вырăнпа утаççĕ. Пуçĕсемпе кутамккисем çеç курăнаççĕ хайсен.

– Выртăр! – шикленнипе команда панă тахăшĕ, туристсенчен пĕри.

– Мĕн пулчĕ? – тĕлĕннĕ экскурсовод.

– Десант отрячĕ кунталла килет, – пăшăлтатнă туристсем. – Авă, кашниннех çурăм хыçĕнче боекомплект кутамкки!

– Ан шикленĕр, кусем чăваш хĕрарăмĕсем, – лăплантарнă экскурсовод, – кÿршĕ яла çăм таптарма каяççĕ.

## Пĕшкĕнсе илеймен

Чирлĕ çын тухтăр патне кĕрет.

– Тухтăр, манăн пилĕк ыратать. Пĕшкĕнейместĕп, – евитлет вăл.

Тĕплĕн тĕрĕсленĕ хыççăн тухтăр чирлĕ çынна эмел çырса парать.

– Çак эмеле вунă кун хушши ĕçсен ыратни иртмелле, – пĕлтерет вăл.

– Вунă кун? Ытла нумай ку! Кĕтейместĕп. Мана халах укол тăвасчĕ. Пĕшкĕнме май килтерекеннине, –васкатать лешĕ.

– Мĕншĕн?

– Çул кĕтессине такам укçа енчĕкĕ çухатса хăварнă та – пĕшкĕнсе илеймерĕм.

## Мăнтăррипе Типшĕмми

Икĕ çын – Мăнтăррипе Типшĕмми – тĕл пулнă.

– Сан çине пăхсан Раççейре выçлăх хуçаланать тейĕн, – тенĕ Мăнтăрри.

– Эсĕ вара çав кризисшăн айăпли пулас, – тавăрнă лешĕ.

## Сăра ĕçни

Виçĕ çын сăра ĕçме шутланă. Хупах тĕлне çитеççĕ – пĕри алăкран кĕмест.

– Ма кĕместĕн? – ыйтаççĕ унран.

– Кĕрĕттĕм те, шалу иличчен кĕсье пушă, – тавăрать лешĕ.

– Атя, кĕр, хамăр ĕçтерĕпĕр.

Виçшер курка ĕçсен кунтан ыйтаççĕ.

– Хăçан шалу илетĕн-ха?

– Калама пултараймастăп. Эсир ĕçлетĕр-иç, эпĕ мар.



**– Арăма курас килменнипе ĕçетĕп.**

– Пью, чтобы не видеть жену.

**И. Алексеев ÿкерчĕкĕ**



## Тавлашу

Икĕ арçын пурнăç тĕллевĕсене сÿтсе яваççĕ.

– Малашне ни-ни, çăвара пĕр тумлам эрех те ямастăп, – тет пĕри. – Паян та пуç çурăлса тухасла ыратать.

– Ваçук, эсĕ пĕр тумлам та ĕçмесĕр чăтасса ĕненместĕп, – тавăрать тепри.

– Чăтатăп!

– Чăтаймастăн!..

– Атя тавлашатпăр.

– Мĕнле?

– Çур литрла...

# «ЦРУ шпионĕ»

Ĕç-пуç Горбачев саманинче, эрех-сăрапа ашкăннине хирĕç кĕрешнĕ тапхăрта, пулса иртнĕ.

Канаш хулинчи шалти ĕçсен пуçлăхĕ участокри милици инспекторĕсене ĕçлесе сипленмелли профилакторие кварталта виçĕ ĕçкĕçрен кая мар ямалли çинчен хушу кăларать. Пуçланать хайхи пĕр-пĕрин хушшинче хăйне евĕр ăмăрту. Кăштахран пуçлăх кăтартусене пĕтĕмлетет. Кашниех ик-виç çынна яма документсем хатĕрленĕ. Николай Квасов капитан çеç нимĕнпе те савăнтараймасть.

– Сире, Квасов, тепĕр эрне вăхăт паратăп, çав хушăра та ĕлкĕреймесен малашне халăх хуçалăхĕнче ăçта ĕçлес пирки ĕнсе хыçма тивет, – асăрхаттарать майор.

Уттарать хайхи Квасов нумай ĕçкĕç пурăнакан Канаш районĕнчи Сухайкассине. Чи малтан урам вĕçĕнче пурăнакан Упа Куçми патне кĕрет. Лешĕ эхлете-эхлете типнĕ тутлă шăршлă клевера аслăк çине сенĕкпе ывăтать.

– Куçма, санăн анкартинче клевер ӳсмест-çке, кăна хăш уйран сĕтĕрсе килтĕн? Чăннине кала, ахальлĕн халех протокол çыратăп та ыранах тимĕр читлĕхе кĕрсе ларатăн, – хăратанçи пулать инспектор.

– Нумай та мар-çке, Николай Карпăч, пĕр тӳшек çеç тултарса килтĕм. Чăннине калатăп. Ахаль те вĕт уйра юлнине çурхи суха умĕн колхоз çуллен çунтарса кĕллентерет. Уншăнах хута вараласа çылăха ан кĕрсемччĕ. Турă пул, – тархаслать кил хуçи.

Хăй чĕркуçленменни çеç.

– Эпĕ саккун çынни, çылăха кĕретĕп-и? Эсĕ вăт çылăхлă, намăса пĕлменскер. Мĕнле кăна çаврăнчĕ чĕлхӳ çапла калама? Ас ту, палкасан-палкасан типме те пултарать вăл сан, – тарăхса каять Квасов.

Куçма парăнма шутламасть-ха:

– Итлĕр-ха, Николай Карпăч, ути тарама-ха, уншăн штраф тӳлеме те хатĕр. Пĕлетĕр-и, мĕн куртăм эп ун чух утă купи çинче? Такам пĕшкĕнсе ларнă та ют чĕлхепе... Телефонпа калаçать. Мана курсан хулă пек антеннăна пуçтарчĕ, унтан аппаратурине хул хушшине хĕстерсе ялалла вашлаттарчĕ. Ют чĕлхепе калаçнăран Америкăн ЦРУ шпионĕ пуль тесе шутларăм. Хăш çурта кĕнине те асăрхаса юлтăм...

Шпион пирки пуçлăха пĕлтерме васкаса Квасов тепĕр кун ĕçе халичченхи пек мар ир пычĕ. Анчах майор унран маларах çитнĕ те дежурнăй докладне итлет.

«Рейдран чи юлашкинчен Рябинин сержант каçа юлса таврăнчĕ, гаража питĕрме вăл маннă». Дежурнăйăн çак сăмахĕсене çеç илтсе юлчĕ Квасов, пуçлăхпа унăн хушшинче маларах мĕнле калаçу пулнине пĕлмерĕ.

– Валери Нестерчă, – хăваласах çитрĕ пуçлăха инспектор, – ман сире пĕлтермелли пит вашнăй сообщени пур.

– Вашнăй, вашнăй мар-и, хальлĕхе санпа сăмах ваклама вăхăт çук. Сансăрах пуç çурăлса тухать, – аллине сулчĕ майор.

– Питĕ вашнăй, питĕ вашнăй, – хăпмарĕ Квасов çав-çавах.

– Кĕр эппин. Тӳрех кала: ЛТПна яма миçе çын хатĕрлерĕн?

– Ун çинчен кайран, юрать-и? Пĕлетĕр-и, Сухайкассинчи Упа Куçми, Куçма Медведев эппин, çĕрле клевер купи çинче ЦРУ шпионне курнă, кайран лешĕ яла кĕрсе çухалнă. Унччен маларах телефонпа калаçнă...

– Мĕнле ЦРУ шпионĕ? Сан мĕн, мухмăр тухса пĕтмен-им? Чим, телефон аппарачĕ терĕн-и çав?

– Раци эппин, – тӳрлетрĕ Квасов.

– Сăнран палласа юлнă-и?

– Юлнă, юлнă...

Çав кунах Сухайкассинче пурăнакан М. килĕнче милици гаражĕнчи автомашинăран çаратнă рацие тупрĕç. Çавăн пирки пĕлтернĕ те ĕнтĕ ирхине Квасов пырас умĕн дежурнăй пай пуçлăхне. Чăн та, вăрă киле клевер купи çумĕпе кайнă, çавăн чух курса юлнă ăна Упа Куçми. «ЦРУ шпионĕ» пирки вара хăйĕнчен хушса каланă.

Тепĕр кун «шпиона» тупса палăртнăшăн пай пуçлăхĕ Квасов капитана укçан преми пани çинчен приказ вуласа парать.

– Эсĕ пĕр алкаша та ЛТПна яман-çке, – преми илнĕ Квасовран куçĕсене чарса тĕлĕнеççĕ ĕçри юлташĕсем.

– Преми илес тесен алкашсене мар, «ЦРУ шпионĕсене» тытмалла, – тет Квасов лĕхлетсе.

**Александр МОКИН**



Эсир пĕри те арăслан курман. Вăл мĕнлине эсир кĕнекесем тăрăх çеç пĕлетĕр. Анчах арăслансене кĕнекесем çинче питех те пĕчĕккĕ туса кăтартаççĕ. Чăннипе вĕсем калама çук пысăк тата питех те вăйлă. Пĕр арăслан икĕ çулти вăкăра çурăмĕ çине çавăрса хурсах çӳлĕ хӳме урлă сиксе каçма пултарать теççĕ. Çавăн пек вăйлă пулсан та, эпĕ ăна тытса курнă.

Хăвăрах пĕлетĕр, пирĕн таврара арăслансем çук. Вĕсем ăшă енче çеç пурăнаççĕ. Çавăнпа эсир манран:

— Çтаппан пичче, эсĕ арăслана ăшă енне кайса тытрăн-и? — тесе те ыйтма пултаратăр. Эпĕ ун пек çĕре кайма та шутламан. Çавнашкалах пуçра та манăн арăслан тытас шухăш пулман. Çапах та эпĕ ăна тытса куртăм, вăл акă мĕнле пулчĕ.

Пĕр çулхине пирĕн ял çыннисем рашчара касса çуракан катка хăмисене станца турттарса тăма Пахчал ялĕнчи Уртиван Кузьмич патне тара кĕрешрĕç. Пĕрре манăн кӳршĕ лашине илсе пĕччен икĕ лавпа катка хăми тиесе каймалла пулчĕ.

Станца çитсе лавсене пушатрăм, лашасене утă парса хам та апатланма лартăм. Унччен те пулмарĕ, пĕтĕм халăх тин çеç çитсе чарăннă поезд патнелле чупрĕ.

— Мĕн пулчĕ-ши капла? Мĕн пирки халăх пăлханса кайрĕ-ха? — тесе вĕсем хыççăн кайрăм.

Пĕр вагонĕ çинче, тимĕртен тунă пысăк читлĕхре, калама çук пысăк арăслан ларать. Хăй çилхине пĕр тăратса, пĕр выртарса каллĕ-маллĕ утса çӳрет, шăлĕсене йĕрсе пирĕн çине çисе ярас пек пăхать.

Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм. Малтанах манăн пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ: «Мĕнле сунарçă тытма пултарнăши ăна чĕреллех?..» Пĕр енчен, тĕнчере ун пек сунарçă çук пек туйăнчĕ. Тепĕр енчен, çак арăслан пĕрре те тимĕр читлĕх ăшне хăй ирĕккĕн кĕрсе ларас çук. Паллах, ăна сунарçах тытнă. Анчах ăçта тата мĕн ятлă сунарçă тытнă-ши?

Манăн хамăн та çавăн пек сунарçă пулса арăслансене чĕреллех тытас килчĕ. Анчах пирĕн патăрта арăслансем çук, акă мĕн пăшăрхантарать мана.

Çапла шутласа тăнă вăхăтра вагон патне иккĕн икĕ пăта яхăн какай йăтса пычĕç.

— Çакăн чухлех çиет-и вара?— тесе тĕлĕнсе ыйтрĕç çынсем.

— Кунсерен икшер пăт çиет, — тет какай йăтса пынисенчен пĕри.

Вăл самантрах пĕр вĕçнеункăллă тимĕр илсе читлĕхри арăслана тепĕр пуçнелле хăвалама пуçларĕ. Анчах арăслан хăй вырăнĕнчен яхăнне те тапранасшăн мар, вăл хăйĕн хӳрипе тимĕр вĕçĕнчи ункăран тирсе илчĕ те çынна хăй патнелле туртма пуçларĕ.

Çакна курсан çынсем хăрасах кайрĕç, вĕсем пурте çынна пулăшас тесе тимĕртен тытса арăслана каяллa туртма тытăнчĕç. Арăслан çапах вырăнтан тапранмасть, тимĕртен туртсан та, çапса лартнă вĕрен пăти пек, хăй вырăнĕнчех тăрать.

Çапла аппаланса тăнипе хамăр та сисмен, поездăн тапранса каймалли вăхăчĕ те çывхарса çитрĕ. Какай пама пынă çынсем питех те тарăхрĕç. Пĕри турчка пек тимĕрне пăрахрĕ те читлĕх алăкне уçса какайне пăрахса пама тăчĕ. Арăслан çав самантрах алăкне ярса тытрĕ. Çынсем хăранипе шăйшай кăшкăрашса илчĕç те пурте çĕре лăпчăнса ларчĕç. Çав самантра читлĕхри арăслан таçта тухса тарчĕ, вагон çинче пушă читлĕх кăна юлчĕ.

Вăл кун станцăра пасарччĕ. Читлĕхрен арăслан тухса тарнине илтсен пасар пĕр самантрах саланса пĕтрĕ. Арăсланран хăраса кашниех пĕрер шăтăрнак кăлара-кăлара кайрĕç. Çапла мана валли пĕр шăтăрнак та хăвармарĕç.

Пурне те паллă, эпĕ çынсем пек шиклĕ мар. Шиклĕ пулсан та мĕнех тăвайрăн-ха çав шăтăрнакпа? Унпа арăслана мар, пăсарана та çапса вĕлереймĕн. Çапла эпĕ, пĕр шăтăрнак илмесĕрех киле пĕр хуйхă-суйхăсăр çитрĕм.

Çакан хыççăн икĕ кун та иртмерĕ, арăслан каçсерен вуншар, çирĕмшер сурăх пăвма пуçларĕ. Таврари çынсем сурăхĕсене çеç мар, пĕтĕм вырлăх-чĕрлĕхне юман витесене, чул нӳхрепсене хупса усрама пуçларĕç.

## Куçма

# Çăка ларсах чĕрелле

Анчах капла туни те пулăшмасть-мĕн. Арăслан ĕнесене тапăнма пуçларĕ, вара пĕтĕм халăх пысăк хуйха ӳкрĕ. Юлашкинчен çынсем:

— Каплах пулсан пĕр выльăхсăр тăрса юлăпăр, — тесе хуйхăрма пуçларĕç.

Нимĕн тума та çук, пур ялти сунарçăсем те çак арăслана мĕнле тытасси çинчен канашлама тытăнчĕç. Славаш сунарçисем ялти хĕрарăмсен сӳсне пĕтĕмпех пухса таната яваççĕ: арăслана танатапа тытатпăр теççĕ. Мăнçут сунарçисем шартлама сивĕрех уя тарăн та пысăк шăтăк чавма пуçларĕç.

— Кунта вăкăр яратпăр та выçă арăслан килсе анса каять, — теççĕ.

Пахчал сунарçисем тата Ямаш вăрманне чĕртсе çунтарса ярасшăн:

— Вара унта пурăнакан арăслан та çунса вилет, — теççĕ вĕсем.

Эпĕ хальччен пĕрре те арăслан тытса курман. Çавăнпа-и тен манăн канашсене пĕр çын та итлемерĕ.

— Санран пулать-и арăслан тытасси, куянсене тытма лайăхрах вĕренха, — терĕç мана çынсем.

Çапла кулни мана питех те пăшăрхантарчĕ. Манăн епле пулсан та вĕсене хамăн вăя кăтартас килчĕ.

Вăйĕ вара чăнласах пурччĕ. Урасене икшер пăт пуканĕ çыхса виçшер çухрăм каяттăм. Çăл куçĕ майлах тапса тăратчĕ манăн вăй.

— Вăл вăй пĕр арăслана çеç мар, вунă арăслана та тытма çитĕ-ха, — тесе пĕр ирпе тухрăм та утрăм Ямаш вăрманне.

# ЧУЛКАÇ хăвăлĕнче арăслана тытрăм

Вăрманта лăпах кăнтăрлаччен утса çӳрерĕм, ниçта та арăслан йĕрне тĕл пулмарăм.

— Путех ку арăслан эпĕ кунта пурăнни çинчен сиссе таçталла тарнă пулĕ, — тесе те шухăшлатăп аптăранă енне.

Вăрманта пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнменнине пула тата хамăн пуç мĕн шутлани тĕрĕсех пулаканччĕ тесе киле кайма шут тытрăм. Анчах ик-виçĕ утăм та тумарăм, арăслан пĕтĕм вăрмана чĕтретсе уласа ячĕ. Манăн çӳç-пуç вирелле тăрса кайрĕ, пуçри çĕлĕк чутах хывăнса ӳкетчĕ.

Пăхатăп, арăслан ман паталлах утса килет, читлĕхрен тухса тарнă арăсланах. Эпĕ текех хăраса тăмарăм, чĕринчен тĕллесе пĕрре пенипех йăвалантарса антарăп терĕм те пăшала ярса тытрăм, анчах алăсем чĕтренипе пăшалне те переймерĕм.

Арăслан, хăйне пеме хатĕрленнине пĕлсе-и тен, татах хăрушланса кайрĕ те ман çинех сиксе ӳкрĕ. Çак самантра пуç ăслă шухăш шухăшласа кăларман пулсан арăслан ури айĕнче пашалу пекех лапчăнса юлаттăмччĕ пулĕ. Манăн çумрах хăвăл çăка ларать. Эпĕ каяллла çавăрăнса пăхмасăрах çав çăка хăвăлне кĕрсе лартăм. Çав самантрах арăслан та çăка патне çитсе тăчĕ.

Анчах вăл темĕн пек хăтлансан та ман пата кĕреймерĕ. Юлашкинчен вăл çăка хăвăлĕ ăшне сăмсине чиксе ячĕ. Эпĕ текех хăраса тăмарăм, мĕн вăй çитнĕ таран пăшал кучĕпе унăн сăмсинчен çапрăм.

Арăслана хытах лекрĕ, унăн сăмсинчен кĕрех юн тапса тухрĕ, хăй çапах та мана пăрахса каймасть. Юнне юхтарса пĕтерчĕ те арăслан ман пата кĕме пысăк шăтăк шырама пуçларĕ. Çăка тавралла темиçе хут çаврăнса та вăл хăйне тивĕçлĕ шăтăк тупаймарĕ. Нимĕн тума аптăранă енне эпĕ кĕрсе кайнă шăтăк умне пырса тăчĕ, çăка хăвăлне хӳрине чиксе ячĕ, мана хӳрипе çаклатса туртса кăларас терĕ пулмалла.

Анчах эпĕ хăраса тăмарăм, арăслан хӳринчен çавăрса тытрăм та питĕ хытă кăшкăрса ятăм. Арăслан хăранипе унталла та кунталла сикме пуçларĕ. Эпĕ хытăран та хытă кăшкăрма тытăнтăм. Арăслан ниçта кайса кĕме пĕлменнипе пур вăйĕпе сикме пикенчĕ. Çапла вăл эпĕ кĕрсе ларнă çăкана хăвăлĕ-мĕнĕпех кăкласа кăларчĕ те таçталла сĕтĕрсе каять.

— Ара, ку арăслана хамăр ялах илсе каяс, — терĕм.

Анчах вăл пирĕн ял тĕлне пĕлмест, çавăнпа манăн унпа пит нумай аппаланмалла пулчĕ. Малтан эпĕ çăка хăвăлĕнче ларсах унăн тарринчи чи пысăк туратне хуçса илтĕм, унтан çав туратпа çапа-çапах арăслана хамăр яла каймалли çула кăтартса пытăм..

Яла лăпах каç пулас умĕн çитрĕм. Анчах яла кĕрес умĕн пĕр инкек пулчĕ. Вăрманта ниçта та çакланмасăр тухнă çăка уй хапхинчен çакланса ларчĕ. Çаканнине вĕçертсе ярас тесе темле те аппаланса пăхрăм, анчах çăкана ниепле те вĕçертеймерĕм. Çапла манăн çăка хăвăлĕнче лăпах тепĕр ирччен кĕтсе вырмалла пулчĕ.

Тул çутăлса çитнĕ çĕре уй хапхи патне пĕтĕм ял халăхĕ пухăнчĕ:

— Кам унта, çăка хăвăлĕнче?! — тесе тĕлĕнсе ыйтаççĕ манран çынсем.

— Эпĕ, Лапшу Çтаппанĕ, — тетĕп çаксене.

Ял халăхĕ манран тĕлĕнсех кайрĕ.

— Мĕнле тытрăн та мĕнле тытрăн ку арăслана? — тесе минретеççĕ çаксем.

Эпĕ вĕсене арăслана мĕнле тытни çинчен каласа памарăм. Хам çăка хăвăлĕнче ларсах вĕсемпе кĕске пуху туса ирттертĕм, вăл пуху председателĕ хамах пултăм. Унта эпир пĕр ыйту — арăслана ăçта хупасси çинчен сӳтсе яврăмăр. Анчах вăл ыйту пит вăрăма тăсăлчĕ. Вĕçкĕн Ваççа пăшалне йăтса тухрĕ те:

— Ниçта та хупма кирлĕ мар, халех персе вĕлеретĕп те Лапшу Çтаппанне те вилĕмрен хăтаратăп, — тет.

— Хăвăн ухмах пуçупа лăпăртатса тăма та намăс, — тесен çеç вăл чарăнса ларчĕ, унпа вара пĕр çын та килĕшмерĕ.

Арăслана ăçта хупмалли çинчен хамăнах каласа памалла пулчĕ. Самантрах эпĕ Хриссан Мĕкĕтин чул нӳхреп пурри çинчен аса илтĕм, кунта хупнă арăслана кайран тимĕр читлĕхе кăларма аван пулать терĕм.

Манăн шухăшпа пурте килĕшрĕç. Çынсем пĕр самантрах пуртăсемпе пăчкăсем илсе тухрĕç те çакланса ларнă çăкана вĕçертсе ячĕç, хăйсем Хриссан Мĕкĕтин нӳхрепне уçма чупрĕç.

Нӳхреп патне çитсен ывăннă арăслан савăнсах кайрĕ, тӳрех нӳхрепе сикрĕ. Эпĕ унăн хӳрине ятăм та çăка хăвăлĕнчен сиксе тухрăм, нӳхреп çăварне хупса лайăх питĕрсе лартрăм. Çав каçах икĕ çынна станца ятăм, унта вĕсене çапла калама хушрăм:

— Ямаш ялĕнчи чаплă сунарçă Лапшу Çтаппанĕ читлĕхрен тухса тарнă арăслана чĕрĕллех тытнă, арăсланне илсе кайăр!

Çак арăслана чĕрĕллех тытнă хыççăн мана пĕтĕм тĕнче пĕлсе çитрĕ. Çапла эпĕ пĕр арăслан тытнипех тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă пулса тăтăм.

# Хӳтĕлевçĕ кушак

Хĕветле кинемей вирĕ çул кушаксăр пурăнчĕ. Сарайĕнче те, кĕлетре те шăшисем хуçаланаççĕ. Чăхсене çитерес апата тĕшĕреççĕ. Пĕррехинче хĕрĕ ачисемпе яла килчĕ. «Анне, сана валли парне – кушак çури илсе килтĕмĕр», – терĕ хĕрĕ. Мăнукĕсем кукамăшне хура тĕслĕ кушак çури тыттараççĕ. Машка ятлă теççĕ. Хĕветле кинеми мăнукĕсем кушак чĕппи илсе килнĕшĕн савăнса: Машка тетĕр-и-ха, манăн мĕн çитермелле-ха ăна? Сĕчĕ çуккă, качака сĕтне çисен кăна», – тет.

«Куками, ан хăра, Машка апат тиркемест, мĕн паратăн пурне те çиет», – теççĕ мăнукĕсем.

Хăнасем кайсан Хĕветле Машкăпа пĕрле пурăнма пуçларĕ. Мĕн панине пурне те çиет. Апат тиркемест кушак. Тула тухма вĕренчĕ. Çур çул иртсен Машка самай ӳсрĕ. Хĕветлерен пĕр утăм та юлмасть. Шăши тытма хăнăхрĕ. Тепĕр чухне сарайĕнчех çĕр каçать. Майĕпен Хĕветле кинеми сарайĕнче, кĕлетсенче шăшисем хуçаланма пăрахрĕç.

Çулталăк иртсен Машка пĕр эрне çухалса пурăнчĕ. Кинемей самай пăшăрханчĕ. Таçта, сарай тăрринче, кушак çурисем сас панине илтсен савăнчĕ. Ара, Машка çурлană иккен.

Пахчари хурăн çинче кашни çул тенĕ пекех ула курак йăва çавăрса чĕпĕ кăларать. Çавна пула чăх чĕпписене ирĕке яма май килмест, часах тытса каяççĕ. Кăçал та ула курак хурăн çинче йăва туса чĕпĕсем кăларнине таçтан сиснĕ, хурăн патне çӳреме тытăнчĕ. Хурăн таврашĕнче кураксем краклатаççĕ кăна. Машка хăраса ӳкмерĕ, ула куракcем тапăннине хирĕç тăчĕ. Икĕ ури çине тăрса малти урисемпе ула курак тапăннинчен хӳтĕленчĕ. Çапăçура Машка çĕнтерчĕ. Ула курак кушакăн çивĕч чĕрнине çакланчĕ. Çунаттисемпе çатăлтатрĕ те çĕре персе анчĕ.

«Ну, Машка, чăн-чăн паттăр, манăн хӳтĕлевçĕ», – тĕлĕнчĕ Хĕветле. Çакăн хыççăн ула курасем пахчари хурăн çинче йăва çавăрма пăрахрĕç. Хĕветле чăххисем хăрушлăхран хăтăлчĕç.

**А. ВИШНЕВСКИЙ**



**13 уйрăмлăх тупăр**

Найдите 13 отличий



Светлана АСАМАТ

# Чăх кулли

Урампа хитре тумланнă, чипер сăнлă яштака хĕрарăм утать. Ун хыççăн вăтам пÿллĕ, вăтам сăнпитлĕ хĕрарăм янăрашса пырать.

— Ха-а, авкаланать, ăма-ан. Чисти ăман вĕт эс, ăма-ан. Чăх та çиет сана, кайăк та çиет сана, пулă та çиет сана, ăмана.

— Мĕн çухăрса çÿрен ман хыççăн? Сан хÿресĕр автану-и унта, сан хура кураку-и унта, сан çăрттану-и унта, мана кирлĕ мар. Тупнă ăман, ман малта та, хыçалта та кăпăшка...

— Ы-ых, сана-а! Симĕс шăна, вăрăм туна, нăйăлти ÿпре. Пăва-ан...

— Уйди-ка, сан хăрăк лашу-и унта, сан лÿппер вăкăру-и унта, мана кирлĕ мар. Ан нăриклет! Илтрĕн-и? Ирсерен хăлха тасатас пулать.

— Кирлĕ мар тăк мĕн авкаланатăн, мĕн нăйăлтататăн ман Çеруш тавра?

— Çеруш тетĕн-и? Кирлĕ мар мана сан Çерушу. Кирлĕ пулсан кушак пек йăпăлтататтăм, çĕлен пек явакланăттăм...

— Чарăн-ха, чарăн. Сана кирли ман Çеруш мар-и?

— Эс ху чарăн чакак пек чакăлтатма.

— Чарăнса тăр халĕ, чарăнса тăр тетĕп.

— Хураçка пек вĕрсе ан лĕпĕстет ман хыççăн. Мана кирли, ху калашле, сан Çерушу мар. Ман хамăн чун илли пур.

— Пур-и?

— Пур, анчах та эпĕ ăна кирлĕ мар.

— Эсĕ ăна кирлĕ мар-и? Кала, кам вăл, хам кайса калатăп.

— Каланин усси пулас çук.

— Э-э-эй! Куçĕ курмасть ун, куçĕ курма-асть. Чечек пек хитре вĕт эс, çурхи çеçке пек хитре. Каснă-лартнă пукане пек чипер...

— Чĕлхÿ миçе юплĕ вара сан? Тин çеç тем те пĕр каласа хăртса пĕтертĕн, халь тепĕр май çаптаран.

— Çеруша туртса илесрен хăратса илес терĕм. Пĕлетĕн вĕт, пĕлместĕн мар ĕнтĕ эпир унпа туслине.

— Эсир туслине-и? Эх, айван, пăс кăларса çÿретĕн-и? Çерушшăн çапăçатăн-и? Кун пек çухăрса çÿресен тарать вăл санран.

— Çеруш мана пăрахсан-и, эпĕ Çеруша мар, лешне, йĕке хÿрине, пĕр тĕттĕм кĕтесре шач! тутарап.

— Çеруш хăвна нăч! тутарасран хăрамастăн-и?

— Çук... Асту, ман Çеруша ан çыпçăн. Эпĕ унсăр пурăнаймастăп, эпĕ ăна вилсе каясла юрататăп. Аха-а... Эс никама та ан кала... Эпĕ вăл мана тĕкĕннĕ-тĕкĕнмен вилме пуçлатăп, сывлăш пÿлĕнсе ларать, пуç çаврăнса каять... Чуп тума пуçласан лĕштĕрех каятăп, тăн çухататăп... Ла-айăх пулса каять, мунчари пек вĕриленсе каятăп. Ай, каларăм...

— Ишĕлсех анатăн-и?

— Тем калать? Ишĕлсе анма тислĕк купи мар, утă капанĕ мар... Эс юратса курман-им?

— Курнă-и, курман-и... Ĕненместĕп эп сана.

— Ой... Сар çу пек ирĕлсе каятăп... Çеруш — манăн, шăп та лăп ман арçын. Ăнланатăн-и?

— Ăнкаратăп-ха.

— Хăрăк лаша, лÿппер вăкăр тесе пĕтертĕн, вăл хăрăк та мар, лÿппер те мар... Вăл питĕ нăкă арçын. Асту, никама та ан кала, ăмсанаççĕ.

— Сана-и?

— Пире, Çерушпа иксĕмĕре ăмсанаççĕ...

— Аха пуль...

— Вот лайăх. Юрĕ-ха, пĕрне сиртĕм пулас, пĕрне пĕлтĕм. Теприне хирмелле. Куратăн-и, пырать, пирĕн урамалла анать. Мĕн шыраса çÿрет-ши?..

— Тукасри Ленкка-и? Аппăшĕ патне анать пуль?

— Аха, аппăшĕ патне...

(Ленккана хирĕç утса çухăрашма пуçлать: «Çĕле-ен, шăна-а, шапа-а, ÿпре-е...»).

«Мĕн пулса иртет тĕнчере? Юрать хусах Çеруш пур. Авланман та ирĕклĕ, авланас та çук. Мĕне кирлĕ ăна çемье? Çемьене пăхас пулать. Ун тавралла ав пĕтĕм ял хĕрарăмĕ çаврăнать. Пĕрисем унпа вăрттăн пурăнаççĕ, вăтанма пăрахнисем чĕнсех кĕртеççĕ. Ăçта тухса тарас-ши? Арçынсем кăна мар, хĕрарăмсем те, ачисене амăшне шанса хăварса туха-туха каяççĕ. Самаях ĕçлесе илеççĕ, киле-киле каяççĕ киле, отпуска килнĕ пек. Мĕн туса пурăнас çак ялта хăрса? Ялĕ те вată йывăç пек хăрсах пырать. Шкула та хупрĕç, учительсем ĕççĕр тăрса юлчĕç, кÿршĕ ялти шкулта ĕç вырăнĕ тупăнасса шанма çук. Самани япăхса кайрĕ. Çамрăксем эрех-сăрапа иртĕхеççĕ. Намăса пĕлмеççĕ, чунпа чухăн ÿсеççĕ, мĕн тери шел ачасене. Мĕн кĕтет вĕсене? Пуйма ĕлкĕрнисем пуça каçăртаççĕ... Аякка тухса кайса, пĕр-пĕр йĕркеллĕ арçынпа паллашса, пĕрлешсе çĕнĕ пурнăç тума пулĕ-ши? Пулмасть пуль... Хальхи арçынсем пуян хĕрарăм шыраççĕ. Хальхи каччăсем хваттерлĕ, машинлă хĕрсен пуçне çавăраççĕ. Манăн хĕре качча илекен тупăнать-ши? Хальхи мăшăрлану никĕсĕ юрату мар – пурлăх.

Пурлăхне юратса качча каяççĕ, пурлăхне хапсăнса качча илеççĕ. Каятăпах, ăçта та пулин каятăпах. Хам та айван, анчах та хамран та айванрах çын кулли пулас килмест», — хăйпе хăй калаçса, сапаланса кайнă вăрăм çÿçне çивĕтле-çивĕтле, йĕпеннĕ куçне шăла-шăла тăçта утать çамрăк та хитре хĕрарăм.

## Вулакан çырăвĕ

Хисеплĕ «Капкăн»! Эпĕ сана чунтан юрататăп, кашни кăларăмнах алăран ямасăр вулатăп. Çапах та хама чылайранпа кăсăклантакан ыйту хуравне тупаймастăп-çке. Пĕлетĕн-и, ку чухне çĕтĕк джинса модăра. Хуçисем шăлавара юри шăтарнине те чухлатăп. Çавăн пекех çĕтĕк майкăсемпе футболкăсем те модăна кĕрсе пыраççĕ тет. Кăкăр тĕлĕнче ал лаппи пысăкăш шăтăкли уйрăмах хаклă тенине те илтнĕ-ха. Хисеплĕ тусăм! Çырса пĕлтер-ха, хăçан çĕтĕк чăлхасем модăна кĕреççĕ-ши? Саплăк лартсах ĕмĕр иртессĕн туйăнать.

Саплăккассинчи Матĕрне



– Марьиванна! Эс ытлашши хавхаланса ан кай-ха!
– Марьиванна! Вы там сильно не увлекайтесть!

## Асра тытма

Упаленсен – такăнмастăн.

Хăвна ыттисем асăрхаччăр тесен пурне те асăрхаттарусем пар.

Кулач çиес тесен нушаран ан хăра.

Ăслă çын пек курăнас тесен чĕлхӳне шăл хушшинчен ан кăлар.

## Тивĕçлĕ ыйту

Пĕр хĕрарăм тухтăр пӳлĕмне кĕнĕ те ыйтнă тет:

– Тухтăр, хальхи арçынсем пĕчĕк кăкăрлă хĕрсене ытларах юратаççĕ тенине илтрĕм. Эпĕ вара пиллĕкмĕш номерлĕ бюстгальтерпа çӳретĕп. Манăн мĕн тумалла?

– Савăнсах çыхмалла. Лăпăстие тухичченех.

## Ăнлантару

Эпĕ, Иван Петрович Сидоров, тунти кун ĕçе тухаймарăм. Мĕншĕн тесен шăмат кун чирлĕ юлташ патне сыватмăша кайрăм. Телее, манăн юлташ сывалнă иккен. Çав сăлтавпа иксĕмĕр пĕрер черкке ӳпĕнтертĕмĕр. Унтан тата темиçешер. Кайран хамăр та ураран ӳкнĕ. Ыттине нимĕн те ас тумастăп.

## Шуйттан – юнашарах!

– Шуйттан та шуйттан тетĕн. Шуйттан ăçта пурăннине пĕлетĕн-и-ха? – ыйтать арăмĕ упăшкинчен.

– Пĕлмесĕр, ху ир те, каç та манпа пĕрле-иç. Юрать ĕçе кайсан санран вăхăтлăха хăтăлатăп.

## Шăршă ăçтан тупăннă?

Сыватмăшра. Тухтăр палатăна чирлисем патне кĕрет те:

– Фу! Кунта эрех шăрши перет. Кам ĕçнĕ, çавна халех киле ăсататăп, – тет çирĕппĕн.

– Эсир кĕриччен нимĕнле шăршă та çукчĕ-иç, – тавăраççĕ чирлисем.



## Пулмасла халап

– Пĕлетĕр-и, эпĕ самолетпа вĕçсе курнă, – мухтанать пĕчĕк Петюк тантăшĕсем умĕнче.

– Хăçан? Кампа? – ыйтаççĕ ачасем.

– Тахçанах, аннепе пĕрле.

– Çӳлтен пăхсан пирĕн ял еплерех курăнать, – кăсăкланса тĕпчеççĕ пĕчĕккисем.

– Пĕлместĕп, эпĕ ун чухне çуралайманччĕ çав.

## Америка экологĕсем асăрхаттараççĕ

Америка Экологи пĕрлĕхĕн тĕпчевĕ акă мĕн пĕлтерет: «Çĕр-шывран ăсатакан улма-çырлапа пахча çимĕçре йывăр металл чылай. Çавăнпа кунта çитĕнтернĕ çимĕç тĕнчери стандартсене тивĕçтерместь». Пăтăрмах сăлтавне тимĕр-тăмăр промышленноçĕ вăйлă аталаннипе çыхăнтараççĕ. Пысăк заводсемпе юнашар пурăнакансен сывлăхĕ хавшани те çакнах ĕнентерет. Тĕнчере экологи ыйтăвĕ çивĕчленни, сиенлĕ çимĕçе сутнă чухне нимĕнле чару та çукки хальлĕхе никама та шухăшлаттармасть-ха.

## Тĕнчери пуян хуласем

«Тĕнчери чи пуян хуласем Америкăра выранаçнă», – çапла пĕлтерет Америкăри Брукингс хулинчи пĕр институт irrттернĕ тĕпчев. Çакна вĕсем çĕр-шыври çын пуçне тивекен пĕтĕмĕшле продукт шайĕпе хакласа палăртнă. Тĕнчери чи пуян 10 хуларан улттăшĕ Америкăра вырнаçнă имĕш. Виççĕшĕ кăна – Европăра, тепри – Араб Эмирачĕсенче.

Шел, Раççейре çакăн йышши тĕпчевсем ирттерекен çук. Чăваш Республикин тĕп хули миçемĕш вырăн йышăннă пулĕччĕ-ши?

## Испани арçынисем – чи лайăххисем

Европăра 20 çĕр-шыври хĕрарăмсемпе ыйтăм ирттернĕ: «Хăш çĕр-шыв арçынни сана килĕшет?» Çак ыйтăмра Испани арçыннисем чи нумай бал пухнă. Çавăн пекех килĕшекеннисен шутне Бразили, Итали, Франци тата Ирланди арçыннисем кĕнĕ. Вырăс арçыннисем хыçалтан 10-мĕш вырăн йышăннă. Кăмăла кайманнисем – нимĕç арçыннисем. Вĕсенчен аван мар шăршă кĕрет имĕш.

## Çемье – патшалăх тĕрекĕ

Малайзире çемье арканасран упранмалли меслет тупнă. Влаçра паракансем пĕр-пĕринпе хирĕçсе пурăнакан мăшăрсене вырăнти бюджет шучĕпе отпуска яма, иккĕмĕш хут «чуп-чуп уйăхĕ» ирттерме сĕнеççĕ. Упăшкипе арăмне виçĕ кун та икĕ каçлăха чаплă курортсене канма ăнеççĕ. Влаç арçынпа хĕрарăма лăпкă лару-тăрура хăйсен çивĕч ыйтăвĕсене сÿтсе явма, арканас патне çитнĕ çемьене упрама май туса парать. Çемье патшалăх тĕрекĕ пулнине шута илсен кунта нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Ку тĕлĕшпе Малайзи çĕр-шывĕ тĕрĕс çул-йĕр суйласа илни сисĕнет.

## Конкурсри камит



Евровидени конкурсĕнче Австралирен килнĕ 25 çулти каччă çĕнтернĕ. Хĕрарăм тумĕ тăхăннăскер хăйне Кончита Вурст ятлă тесе пĕлтернĕ. Тĕлĕнмелле! Музыка конкурсĕ цирка çаврăннă-им?






**Н. КРАСНОВ (Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ**

**Сылтăмалла:** 1. Унпа хăйă чĕлме аван. 2. Пулас король (шахматра). 3. Çатăркка хутаç. 4. Ç. Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчи сăнар. 5. Помидор. 6. Хаклă йышши чулсен виçи. 7. ... хакĕ сивĕре паллă (каларăш). 8. Ялти ...а киле пырса ан кала, килти ...а яла кайса ан кала (ват.сăм.). 9. .... куçне çăхан чавмасть (каларăш). 10. Пĕр карта ут – тытса чарма çук (туп. юм.)

**Сулахаялла:** 1. Тӳпе тĕсĕ. 2. ... пĕрле, телей уйрăм (ват. сăм.). 3. «Хĕрлĕ автан» ташши. 4. Çурçĕрти халăх. 5. Элек ... пек: пĕр вараласан часах тасалмасть (каларăш). 6. Юр çинче ... ан шыра (ват. сăм.). 7. Вăл икĕ куçлă та пулать теççĕ. 8. Çăткăн вĕçен кайăк. 9. Çичĕ кĕтеслĕ, пĕлмесен хам калăп (туп. юмах). 10. Пăрахут.

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ капкăнкаçмăш хуравĕсем:**

**Сылтăмалла:** 4. Каçпала. 7. Пасар. 8. Çăкăр. 11. Тăвар. 14. Тăван. 15. Пуртă. 16. Тар. 17. Юпа. 19. Марал. 21. Сахал. 22. Лутра. 25. Касан. 26. Ухмах. 28. Саламат.

**Аялалла:** 1. Салам. 2. Упа. 3. Алтăр. 5. Карат. 6. Тăлăп. 9. Сăмавар. 10. Саппоро. 12. Кушак. 13. Утрав. 18. Кабак. 20. Курак. 23. Карап. 24. Ахрат. 27. «МАН».



М. Ларичев ӳкерчĕкĕсем



**Сăмахсăрах.** **Без слов.**

Журналти ӳкерчĕксене www.cartoonbank.ru сайтран илнĕ